ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

20 (4382) №, 2014, çу, 22 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ХАСТАР ПЕДАГОГ

## Хам вĕрентнĕ ачасемшĕн савăнатăп



**Вăрмар районĕнчи Мăнçырма шкулĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Зоя Даниловна Илларионовăна ачасем çав тери юратаççĕ. Сăвă-калав çырма кăмăллакансем пушшех ун çумнелле туртăнаççĕ.**

– Хăш чухне хăй ачалăхне аса илсе тĕлĕнмелле интереслĕ каласа парать вăл, вара унăн сăмахĕсене шăпăрт итлесе ларатпăр. Шкулта чухнех çав тери нумай вуланă-çке вăл, – теççĕ вĕренекенсем.

Чăн та, хăй вăхăтĕнче хастар педагог библиотекăран тухма пĕлмен. Кашни каникула валли чылай кĕнеке илсе аннă. Вĕсене килне аран йăтса çитернĕ. Амăшĕ ун çине пăхса:

– Ах, ачам, капла ялан вуланипе аслă шкултан вĕренсе тухмасăрах инженер пулатăн пулĕ. Пушă вăхăтра канас чух ялан алла кĕнеке тытатăн. Канса илсем, ачасемпе выля. Акă малтан мана шыв ăсса килсе пар та – тух урама, – тенĕ хĕрхенсе.

Хаçат-журнала та вулама кăмăлланă хĕр ача. Час-час амăшĕ ырăнне почтальонкăн йывăр сумкине çакса хаçат валеçме кайнă.

– Вăл вăхăта аса илсен çӳç вирелле тăрать. Ĕçĕ йывăрччĕ. Халăхăн юратнă кăларăмĕсемсĕр пуçне мĕн чухлĕ çырусемпе открыткăсем валеçмеллеччĕ! Уйрăмах уяв умĕн сумка чул чикнĕ евĕр йывăрччĕ. Урамсен ячĕ пулманран ĕç пушшех кăткăсчĕ. Ара, пĕр хушаматлă та пĕр ятлă çын ялта нумайччĕ. Çавна пула çырăвĕсене пăтраштараттăм. Каç енне киле суха тунă лаша пек йĕп-йĕпе çитеттĕм. Çапах чунра ырă-ырăччĕ. Аннен ĕçне çăмăллатса пулăшнишĕн çав тери савăнаттăм, – иртнине аса илнĕ май сăмах çăмхине сӳтрĕ Зоя Даниловна.

Ялан хаçат валеçнĕрен ăна хăшĕ-пĕри:

– Шкултан вĕренсе тухсан аннӳ пекех почтальонкăра вăй хума тытăнатăн ахăртнех, – тенĕ час-часах.

– Çу-у-ук! Эпĕ вĕрентекен пулатăп, çак шухăша эпĕ нихăçан та улăштармăп. Ачасене тарăн пĕлӳ парса çĕр-шыва юрăхлă çынсем тăвассишĕн ырми-канми ĕçлĕп, – мăнаçлăн çеç хурав панă кăсăкланакансене.

Унтанпа шыв-шур нумай юхнă. Чăн та, Зоя Даниловна хăй сăмахне çилпе вĕçтермен. Акă кăçал вăл шкулта тăрăшма пуçланăранпа 48 çул çитрĕ. Хăй ĕçĕпе кăмăллă пултарулă педагог. Чылай вăхăт литература кружокĕ те ертсе пынă.

– Çак çул хушшинче ман çула суйлакан пĕрре мар пулчĕ, савăнатăп вĕсемшĕн. Яла килсен те кĕрсе тухмасăр каймаççĕ вара. Кулленхи пурнăçра пушшех хавхалантарать çакă, – тет Зоя Даниловна.

*Элиза ВАЛАНС.*

Вăрмар районĕ,
Мăнçырма.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Паянхи номерте:

*Эсир «Тантăш» хаçатпа, «Тетте», «Самант» журналсене çыраннă-и? Юнкорсен слечĕн делегачĕсем çак кăларăмсене пурне те çырăнса илме сăмах пачĕç!*

6-7 стр.



• Ентешпе тĕл пулни – чи асра юлнă самант. 2 стр.

• Ирçе Çармăс шкулĕнчи Карина Яковлева – класри пĕртен пĕр хĕр ача. 3 стр.






• Ĕмĕрхи «Нарспи» паянхи куçпа. 4 стр.

• Тăлăха юлнă кашкăр çурисем. 11 стр.



# Ентешсене сума суса



Çак кунсенче Вăрмар районĕнче Раççей тава тивĕçлĕ спорт мастерĕн, Чăваш Республикинчи пушара хирĕç кĕрешекен управленийĕнче вăй хуракан Светлана Захарова майорăн парнине çĕнсе илес тĕлĕшпе çăмăл атлетсен кросĕ иртрĕ. Аслă Çĕнтерӳ пулнăранпа 69 çул çитнине, Раççейри пушар хуралĕ 365 çул тултарнине халалланă мероприятие район çыннисем, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсем, чрезвычайлă ведомствăн ĕçченĕсем, çамрăксем хутшăнчĕç.

Ăмăрту Вăрмарта вун иккĕмĕш хут иртрĕ. Унта аслисем те, вĕренекенсем те хастаррăн тупăшрĕç. Акă саккăрмĕш класра вĕренекен Катя Ерастова кăçал та эстафетăра палăрчĕ – 1999-2000 çулхи хĕр ачасен хушшинче пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Калама çук пысăк савăнăç ку順 уншăн! Ара, ăмăртăва виçĕ çул хутшăнса та çĕнтерӳçĕ пулайман-çке вăл. Тăвата çул çăмăл атлетикăра вăй хуни сая кайман.

– Кăçал эпĕ эстафетăра пĕрремĕш тухма тĕллев лартрăм, тупа турăм пулин те питĕ пăшăрхантăм та пăлхантăм, – пĕлтерчĕ çамрăк спортсмен финиша çитсен.

Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинче вĕренекенскер район тата республика ăмăртăвĕсене тăтăшах хутшăнать. Медаль, диплом та чылай çĕнсе илнĕ. Хĕр ача хастар ентешĕнчен, Тĕнче чемпионкинчен, икĕ хут Олимп вăййисене хутшăннă Светлана Захаровăран тĕслĕх илет.

Кросс çĕнтерӳçисене медаль тата грамота парса чысларĕç. Вĕсем Афанасий Васильевич Васильев тата Александр Васильевич Щетинин вăрçă ветеранĕсемпе асăнмалăх сăн та ӳкерĕнчĕç.

Вĕренекенсем çак кун спортра çеç мар, ăс-тăн енчен те палăрчĕç. Вăрçă историне, Тăван çĕр-шыв паттăрĕсен ячĕсене мĕнле пĕлнине кăтартрĕç вĕсем. Чи маттуррисене вара парнесемпе хавхалантарма та манмарĕç уяв ертӳçисем.

Çитĕнсен пушар хуралĕнче вăй хурас текенсем вара çак професси пирки тĕплĕнрех пĕлме пултарчĕç. Пушар техникипе тата вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашрĕç. Вут-çулăмпа кĕрешекенсем çинчен ачасене Василий Нягин отставкăри полковник каласа пачĕ. Шăпăрлансем унăн сăмахĕсене интересленсех итлерĕç, ыйтусем парса кăсăкланакансем те пулчĕç.

Сумлă хăнасемпе ветерансем Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче пуç хунисене асăнса лартнă палăк, Совет Союзĕн паттăрĕ Анатолий Казаков, Мухтав орденĕн виçĕ хут кавалерĕ Павел Порфирьев ячĕпе уçнă Асăну хăми умне чечексем хучĕç. Хăрушă вăрçăран таврăнайман ентешĕсене пĕр минут шăп тăрса чысларĕç.

***Нина ЦАРЫГИНА.***

Вăрмар районĕ,
Вăрмар.

# Асра юлнă тĕл пулу



Кĕçех вĕренӳ çулĕ те вĕçленет. Нумай çĕнни парнелерĕ вăл пире. Шкул ачисемшĕн вара уйрăмах асра юлĕ. Мĕнле кăна мероприяти ирттермерĕмĕр пулĕ хамăрăн туслă йышпа! Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче час-часах спектакльсем куратпăр, наци тата краеведени музейĕсенчи экспонатсемпе кăсăкланса паллашатпăр.

Анчахрах Культура çулталăкне халалласа класри тĕл пулăва Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченне Анатолий Николаевич Спиридонов художника хăнана чĕнтĕмĕр. Елчĕк тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ чăваш ӳнерçи ачасене ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ, хăйĕн пĕрремĕш ӳкерчĕкĕсем епле çурални пирки каласа пачĕ. Вĕренекенсем унăн асамлă ĕçĕсене курчĕç. Ӳнер шкулĕнче пĕлӳ пухакан Александра Стифатовăпа Виолетта Ивановăна вара паллă художник питех те усăллă канашсемпе савăнтарма тăрăшрĕ, сĕнӳсем пачĕ.

Тĕл пулу асра юлчĕ. Пирĕн умра çĕнĕ тĕллевсем – ачасене пур енлĕн аталанма пулăшакан мероприятисем татах та ирттересчĕ.

***Роза КОНДРАТЬЕВА,***
***пуçламăш классен вĕрентекенĕ.***

Шупашкар,
33-мĕш шкул.

# Ырă йăла вăй илет

Республикăра çамрăк армеецсен «Зарница» тата «Орленок» вăййисем çирĕп тымар ячĕç. Ытти тăрăхсенче вĕсене пĕр вăхăт ирттерме те чарăннăччĕ. Чăвашра вара республика финалне йĕркелеме кăна мар, çĕр-шыв ăмăртăвĕсене çамрăксем хутшăнмасăр пĕр çул та юлман. 45 çул ĕнтĕ çак ырă йăла пырать! Унсăр пуçне туризмпа спорт мероприятийĕсене те хастар хутшăнаççĕ чăваш хĕрĕсемпе каччисем. Вĕсен çитĕнĕвĕсемпе хăнасем те тăтăшах паллашаççĕ.

Çак кунсенче Шупашкара Мускавран «Красная Звезда» хаçатăн ятарлă корреспонденчĕ Олег Грозный килчĕ. Унпа пĕрле Мускав офицерĕсен «Тăван çĕр-шыв ывăлĕсем» ентешлĕхĕн членĕсем Александр Зиновьев генерал-майорпа Иван Николаев полковник та.

Делегаци Шупашкарти кадет шкулĕсенче пулса Паттăрлăх урокĕсем ирттернĕ. Унсăр пуçне Муркаш районĕнчи Исетеркkĕ ялĕнчи сакăр ывăл çуратса çитĕнтернĕ Т.Н.Николаева Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинчен ултă ывăлне кĕтсе илеймен салтак амăшĕн палăкĕ патне чĕрĕ чечексем хунă. Хăнасем Тăвай районĕнчи Кармал, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл ялĕсенче пулса паллă вырăнсене çитсе курчĕç.

Çамрăксем çĕр-шыва юрăхлă çынсем пулма сăмах пачĕç.

***Владимир ЛЕОНИДОВ.***

**Сăн ӳкерчĕкре:** хăнасем Шупашкар чугун çул вокзалĕнче.



Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин автономи учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● АДРЕС
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13,
VII хут.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
А.ЛЕОНТЬЕВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
И.КОШКИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
2344 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 1829
Пичете çу уйăхĕн 21-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Ирçелле те чăвашла калаçатпăр тăванла...

**Халăха çутта кăларакане унăн тĕп вырăнĕнчен аякра çуралса ÿсни темех мар пуль. Тутарстанри чăвашсем хушшинче кун çути курса, тĕрекленсе çитĕннĕ улăпăмăр Иван Яковлевич Яковлев пулмасан пирĕн литература çак шая çитĕччĕ-ши? Мордва халăхне çутта кăларакане вара, Макар Евсевьевич Евсевьев лингвист, этнограф, Чăваш çĕрĕ çинче, Йĕпреç районĕнчи Ирçе Çармăс ялĕнче çут тĕнчене килнĕ, кунти шкулта пĕлÿ илнĕ. Кăçал вăл çуралнăранпа 150 çул çитнĕ.**

Ирçе Çармăс шкулне васкакан ачасене М.Е. Евсевьев палăкĕ кĕтсе илет. Алăк уçсанах йĕри-тавра тирпейлĕн лартса тухнă атă-пушмак куç тĕлне пулчĕ, çумăрлă çанталăкра урайне вараласран ачасем ăна кунтах улăштарса тăхăнаççĕ иккен.

Директорăн вĕренÿ тата воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ Анатолий Степанович Яковлев шкул пурнăçĕ çинчен каласа панă май тÿрех музейпа паллашма чĕнчĕ. Кунта кăсăкли нумай. Кашни стенд умĕнче чарăнса тăрас килет те çав... Анчах ун пек мана пĕр талăк та çитмĕ. Кĕрсенех сулахай енче М.Е. Евсевьев пурнăçĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе паллашма пулать. Çавăн пекех ял историне пĕлме те кăсăклă. Çак тăрăхра 17-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш кнеçĕ Темей Теняков пурăннă. Шкул ачисене ун çинчен пĕлес тени те илĕртет кунта. Çапла, ку тăрăхран тухнă паллă çын сахал мар: икĕ хут Европа чемпионĕ пулнă В.В. Шамбин, В.Г. Волкова летчик тата штурман, Мордва халăхĕн малтанхи журналисчĕсенчен пĕри П.С. Глухов çыравçă, «Нарспи» поэмăна чăвашларан ирçелле куçаракан А.В. Рогожин сăвăç, Граждан вăрçин паттăрĕ А.Г. Первов... Пурне те асăнса тухаймăп ĕнтĕ. Çамрăк ăру маттур та пултаруллă, хастар, паттăр ентешĕсенчен тĕслĕх илсе вĕсем пек пулма ĕмĕтленет.

Пур ачана та иккĕмĕшĕнчен пуçласа саккăрмĕш класчен ирçе чĕлхине, пĕрремĕшĕнчен вуннăмĕш таран чăвашла вĕрентеççĕ. Ку вăл çирĕп йĕркене кĕнĕ. «Чăвашла вĕренес килменнине никамран та илтмен-ха. Пурте урока хаваспах çÿреççĕ, мĕн хушнине итлеççĕ», – тет чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенĕ Тамара Анатольевна Протасова. Çав вăхăтрах куçарупа нумай ĕçлеме тивнине палăртать ăста педагог. Тепĕр чухне йывăрлăхсем сиксе тухаççĕ те, «Мĕншĕн пĕлместĕп-ха эпĕ çакна? Манăн пĕлмеллех вĕт-ха», – тесе пăшăрханаççĕ вĕренекенсем. Ирçе ачисем пирĕн чĕлхери чылай сăмаха ăнланаççĕ. Сергей Лапшин, сăмахран, хăш чухне тĕрĕс мар куçарасран питĕ асăрханать.

Пултаруллă та тăрăшуллă ача кунта сахал мар. Вуннăмĕш класри Андрей Гордеев акă вĕрентекен каланине яланах итлет, пĕр-пĕр конкурса е олимпиадăна хутшăнма ыйтсан тÿрех ĕçе пуçăнать. «Пĕлÿ енчен те маттур, спортра та хастар», – мухтать арçын ачана вĕрентекен. Тамара Анатольевна ертсе пынипе Андрей вырăнти йăла-йĕрке çинчен тĕпчев ĕçĕ те çырнă, «Тантăшăн» тимлĕ вулаканĕсем унăн таран шухăшлă «Халăх сăмахлăхĕнчи кашни юрă-кĕвĕ – пуянлăх» статйипе паллашнах ĕнтĕ. «Эпир республикăмăр тĕп хулинчен аякра пурăнатпăр. Тен, çавăнпах пуль пирĕн пата фольклористсем ытлах килмеççĕ. Йăла-йĕрке вара пĕрех çухалмасть, аталансах пырать», – тет çирĕм çичĕ çул ачасене чăвашла таса та илемлĕ калаçма вĕрентекен Т.А. Протасова.

Паянхи пăтрашуллă саманара кукăр çулпа кайма, сиенлĕ йăласемпе туслашма йывăр та мар. Юрать-ха, Ирçе Çармăс шкулĕнче пурте – сывă пурнăç йĕркишĕн! Пирус туртакан, сăра-эрехпе иртĕхекен çук кунта. Кашниех пуласлăх хăйĕн аллинче пулнине ăнланать.

## Саккăрмĕшсем пур ĕçре те маттур!

Тамара Анатольевна Протасова – саккăрмĕш класс ертÿçи. Ачасен пурнăçĕпех пурăнать тейĕн вăл. Пурин кăмăл-туйăмне те самантрах ăнланать, сĕнÿ-канашла пулăшать, хăшĕ мĕнпе кăсăкланнине пĕлсех тăрать, тепĕр чухне хавхалантарать те.

Дима Васильев акă темĕн ăсталама та пултарать. Пĕчĕк чухнех вăл тĕрлĕрен тетте туса çывăх çыннисене тĕлĕнтернĕ. Пушă вăхăта ашшĕн гаражĕнче ирттерме кăмăллаканскер ăçта мĕн выртнине куç хупса та каласа параять. Пĕррехинче хайхискер юлташĕсемпе пĕрле кивĕ мотоцикл тупнă, ăна юсаса çĕнетнĕ те чип-чипер çÿреттерсе янă. «Хам та вĕренсе çитрĕм вĕсенчен», – кулать Тамара Анатольевна вĕренекенĕсем çине кăмăллăн пăхса. Маттур ачасен кăсăкланăвне хаваспах пайлать вăл, çавăнпа кĕçĕннисене унпа нихăçан та тунсăх мар.



Физика предметне кăмăллакан Дима кашни урокра тимлĕ итлет, вĕрентекенĕн пĕр сăмахне те хăлха айккипе ирттерсе ярасшăн мар. Ашшĕ механизатор пулнăран та ывăлĕ техникăпа çав тери интересленет пуль. Хăшĕ-пĕ-рин велосипечĕ çĕмĕрĕлсенех камран пулăшу ыйтмалли паллă – Димăран.

«Класĕпех çапла тăрăшуллă çав вĕсем, пĕр-пĕрне ыйту парса вĕренеççĕ, – тет Тамара Анатольевна. – «Коленвал», «шестерня» тата ытти сăмахсен пĕлтерĕшне кам лайăхрах пĕлнине тĕрĕслеççĕ».

Сергей Лапшин та физикăпа туслă, теорие ун пек пĕлекен çук та пуль. Вĕсен ялĕнче лаша тытакан нумай. Сергей килĕнче те пур çак янавар. Арçын ача пĕчĕк чухнех унпа çÿреме вĕреннĕ. Халĕ ак çĕр улми çыртарнă чухне те, утă-улăм турттарнă вăхăтра та, кил хуçалăхри ытти ĕçре те лашана итлеттерме пултарать.



Пулă ятне пĕлессипе Олег Харитонова çитекенни ялĕпе те çук. Шывра пурăнакансем çинчен ятарлă кĕнекере вуласа пĕлекенскер хăйсен тăрăхĕнче ытларах карас, уланкă тата çăрттан ĕрченине палăртрĕ. Арçын ачан ашшĕ – пулăçă, ывăлне мĕн пĕчĕкрен çак чун киленĕçне хăнăхтарнă. Халĕ вĕсен кÿлĕ те пур. Мал ĕмĕтлĕскерсем унта канмалли вырăн тума шухăшлаççĕ.



Саккăрмĕшсем «Патриот» ятлă çарпа патриот клубне çÿреççĕ. Çавна май тĕрлĕ ăмăртăва хутшăнаççĕ. Кăçал акă Çĕнĕ Шупашкарта та палăрнă. Çак туслă класс ачисем яланах пĕр-пĕрне пулăшма хатĕр, йывăрлăхра нихăçан та хăвармаççĕ.

## Класри пĕртен пĕр хĕр ача

«Арçын ачасем мана пур чухне те ăнланмаççĕ ĕнтĕ, вĕсен шухăшлавĕ пирĕннинчен урăхларахçке, – тет Карина Яковлева. – Анчах вĕсем яланах мана хÿтĕлеме хатĕр, пулăшу та сĕнеççĕ. Класри пĕртен-пĕр хĕр ача пулма япăх мар иккен».



Карина тантăшĕсем пекех волейболла выляма ăста. Çак спорт вăййипе еплерех кăсăкланса кайни çинчен шухăшланă май вăл пĕрремĕш ăмăртăва мĕнле хутшăннине те аса илчĕ. Пĕррехинче тренер спортзала чĕнсен Карина унта хĕр тусĕсемпе çитнĕ. Тепĕр куннех хĕр ачасене Канаш районĕнчи Шăхасана район чысне хÿтĕлеме янă. Карина ун чухне пиллĕкмĕш класра çеç вĕреннĕ. Çак вăйă килĕшнĕрен вăл тренировкăсене татах та татах çÿреме тытăннă. «Петр Николаевич тренера тав, вăл маншăн атте пекех. Ăна пула эпĕ волейбол мĕн иккенне ăнланса илтĕм, хама хам çĕнтерме, тĕллеве пурнăçласа вĕренсе çитрĕм. Чăнах та, волейбол манăн пурнăçа нумай улшăну кĕртрĕ», – тет хĕр ача кăмăллăн. Хисеп хучĕсемпе медаль те пур унăн. Команда вара «ФОКА Кубокне» çĕнсе илнĕ. Екатерина Гамова волейболистка Каринăшăн тĕслĕх вырăнĕнче. «Вăл хитре те çÿллĕскер, лайăх вылять. Манăн та ун пек пулас килет», – тет хĕр ача.

Пурнăç тĕллевне вăл ашшĕпе амăшĕ телейĕнче те сывă пулнинче, çемьери тăнăçлăхра курать. Çывăх çыннисен пĕтĕмпех лайăх пулсан çеç хăйне телейлĕ туять.

### Çармăс ялĕ

Атла çырми хĕрринче,
Тукмак сăрчĕ айĕнче
Пур таса та сив çăл куç,
Ун тавра хитре те уç.
Чăн сипетлĕ шывĕпе
Киленеççĕ ялĕпе.
Тватă ĕмĕр каялла
Çармăс ялне пуçлакан
Хăй вăкăрне шыраса
Çитнĕ çăл патне тухса.
Тĕттĕм вăрман варринчен,
Кĕтне çырми хĕрринчен,
Çутă Çармăс ялĕнчен
Пулнă Шайман йăхĕнчен.
Çакă çăл çывăхĕнче,
Çырма урлă сăрт çинче
Лартнă теççĕ хăй çуртне.
Унăн çурчĕ капмарланнă,
Хĕресле урам пуçланнă.
Кашни çулах Çимĕкре,
Хресле урам варринче,
Шайман çурчĕ умĕнче
Ялти яшсемпе хĕрсем
Пулнă вăйă картинче.
Каçсеренех çамрăксем
Шурăмпуçĕ киличчен,
Питрав кунĕ çитиччен
Эх, юрланă юррине,
Эх, ташланă ташшине.
Питрав кунĕ çитсенех,
Кăнтăр апачĕччененх
Çамрăксем, ватти, вĕтти,
Пысăк çын тата ытти,
Купăсçăсем купăспа
Ял пуçланнă вырăна
Килсе çитнĕ хаваспа.
Юрлĕç, ташлĕç, савăнĕç,
Вăйă иртнине асăнĕç.
Ялти тимлĕ ватăсем
Камăн ачи мĕнлине
Танлаштарса сăнаççĕ.
Ÿссе çитнĕ çамрăксем
Кăнтăр апат çитнипе
Вăрманалла утаççĕ.
Тимĕшкасси прачакĕнче,
Ешĕл çеç уçланкăра,
Пысăкункă варринче
Тăхăр ялсем вăййăра.
Вăйă юрри юрласа
Тăхăр пая пайланаççĕ,
Ушкăнĕсем ăмăртса,
Сăвă-такмак каласа
Чăваш ташши çаптараççĕ.
Патварланнă каччăсем
Кĕр мăнтăрĕ çитсенех
Çирĕп çемье çавăрма
Хĕр шыраççĕ вăййăра.
Каç еннелле сулăнать,
Вăйă карти саланать.
Илĕртÿллĕ сар хĕрсем
Вĕрене кăтра çулçинчен
Тата тĕрлĕ чечекрен
Çавăраççĕ кăшăлсем.
Чечек евĕр сар хĕрсем
Атла çырмине çитеççĕ,
Шăпине пĕлес тесе
Пуç кăшăлне çĕклесе,
Асамла чĕвĕлтетсе
Пĕвенелле иштереççĕ.
Питрав кунĕ те юлать,
Каçхи шăв-шав лăпланать,
Хирте ĕçси пуçланать.

*Анатолий ЯКОВЛЕВ.*
Йĕпреç районĕ,
Чăваш Çармăс.

## Кинона йыхравлать фестиваль

УЯВ



Çу уйăхĕн 19-мĕшĕнче «Çеçпĕл» кинотеатрта Шупашкарти кинофестиваль çиччĕмĕш хут уçăлчĕ. Çав кунах куракансем «Она» илемлĕ фильмпа (режиссерĕ – Лариса Садилова) паллашма пултарчĕç. Яланхи пекех кино тусĕсене кăсăклă çĕнĕ фильмсем, çавра сĕтелсем, хаваслă тĕл пулусем парнелĕ фестиваль.

Асăннă мероприятие 2008 çултанпа йĕркелеççĕ. 2009 çулта Чăваш Республикин ертÿлĕхĕ ăна йăлана кĕртме палăртнине Раççей Федерацийĕн Культура министерстви хапăлласах йышăннă. Фестивалĕн президенчĕ – Раççей Федерацийĕн халăх артисчĕ Карен Шахназаров.

Ултă çул хушшинче кинофорум ячĕ-сумĕ ÿсрĕ темелле. Тĕп хуламăра вуншар критик, режиссер, артист çитсе курчĕ. Вĕсен йышĕнче – Эльдар Рязанов, Ирина Муравьева, Лидия Федосеева-Шукшина, Михаил Ефремов, Ирина Скобцева-Бондарчук, Дмитрий Астрахан, Борис Грачевский, Алексей Герман-кĕçĕнни, Юрий Грымов, Сергей Фетисов, Никита Высоцкий, Алексей Нилов, Семен Фурман, Григорий Гладков, Лиза Боярская, Дмитрий Харатьян т.ыт.те.

Куракансем вара Раççейре кăна мар, Казахстанра, Польшăра, Финляндире, Швецире, Таджикистанра, Германире, Украинăра тата ытти çĕр-шывра ÿкернĕ картинăсемпе паллашма пултарчĕç. Кăçал та кино кăтартнипех çырлахман йĕркелÿçĕсем. Пултарулăх тĕл пулăвĕсем, ача-пăча уявĕсем, мастер-классем – пурне валли те вырăн пулĕ. Фестиваль Шупашкартан Хĕрлĕ Чутай тата Патăрьел салисене те утăмлать. Вырăнти халăх Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ артисчĕпе Сергей Фетисовпа тĕл пулса калаçма пултарĕ.

Йăлана кĕнĕ тăрăх, сеанссене тÿлевсĕр кĕртеççĕ. Çавăнпа фестиваль вĕçлениччен пĕр-пĕр фильма çитсе курма васкăр. Кая юлсан каю шăтĕ.

*Ольга ИВАНОВА.*

ÇĔНĔЛĔХ

# Мулпа чулланнă чĕрене витереймĕн куççульпе, е Ĕмĕрхи «Нарспи» паянхи куçпа




**Çу уйăхĕн илемлĕ те хĕвеллĕ кунĕсенчен пĕринче Константин Ивановăн «Нарспийĕ» каллех куракансене хăй ытамне пуçтарчĕ. Çук, оперăна та, спектакле те мар. Хальхинче – «Мир Луксор» кинотеатра «Нарспи» мюзиклăн (авторĕсем – Борис Чиндыковпа Николай Казаков) фильм версине. Ĕненмелле мар пек, темиçе çул каялла кун çинчен ĕмĕтленме çеç пултарнă. Пăх та савăн ĕнтĕ – кинотеатрăн Пĕчĕк залĕнче халăх лăк тулли. Хăшĕ-пĕри пукансем çине вырнаçса ĕлкĕрнĕ. Каярах юлнисем стена тăршшĕпех тăраççĕ. Ик сехете тăсăлнă фильмран тухса каякан та, каллĕ-маллĕ утакан та, хыттăн калаçса-ахăрса ыттисене кансĕрлекен те çук. Шăп, пĕтĕм тимлĕх – экран çине.**

## Куракана тыткăнлакан фильм

«Нарспи» мюзиклăн киноверсине Чăваш Республикин Пуçлăхĕн грантĕ пулăшнипе хатĕрленĕ. Ăна куракан патне çитерес тесе çулталăк çурă ырми-канми ĕçленĕ пултарулăх ушкăнĕ. Илемлĕ фильмăн режиссерĕ – Андрей Васильев. Вăл Шупашкарта çуралса ÿснĕ. 2010 çулта Чăваш патшалăх культурăпа искусствăсен институтĕнчен вĕренсе тухнă. Ăсталăхне актер искусствин факультетĕнче туптанă. «Нарспи» – çамрăк режиссерăн калăпăшлă пĕрремĕш ĕçĕ.

Мĕнпе илĕртÿллĕ-ха фильм? Чи малтанах – вăл чăвашла пулнипе. Кинотеатрта кунашкал пĕр картина та çуккине, паянхи кун тĕлне пысăк аудитори умне тухнă пĕрремĕш чăваш фильмĕ пулнине шута илсен савăнмалли пурах. Пĕтĕм ĕç-пуçа Чăваш патшалăх филармонийĕн сцени çинче ÿкернĕ. Апла пулин те хушăран кун пирки вуçех манатăн. Видео, сасă «эффекчĕсен» витĕмĕ пысăк. Акă Нарспи каçхи вăрманта чупать. Тавралла сĕмлĕх, армак-чармак йывăççем. Çитменнине, Тăхтаманăн сăнĕ йĕрлет, куçне курăнать. Çак самантра куракан та ăраскалсăр Нарспипе пĕрле пек. Уншăн пăшăрханать, хурланать вăл. Куççулĕ те шăпăртатса анать. Пысăк плансем илсе пани те питĕ пĕлтерĕшлĕ. Актерсен шухăш-туйăмĕ сăнпитре чĕррĕнрех сăнарланать. Эппин, залра ларакан та вĕсене аванрах туять. Мюзиклпа тÿрремĕн паллашнă чухне кун пеккине асăрхаймăн. Кунта юрă-кĕвĕпе сасă вăйĕ мала тухаççĕ. Ĕç-хĕле вара пĕтĕмĕшле картинăсенчен хаклама тивет.

## «Юрату юлтăр юмахра...»

Кăтарту икĕ пайран тăрать. Пĕрремĕш пайĕ Нарспие савнийĕнчен уйăрса Тăхтамана качча панипе вĕçленет. Малтанхи сценăсем çутăрах та хĕвеллĕрех



тĕк каярах тĕссем тĕксĕмленеççĕ. Хĕрсемпе каччăсем вăйăра савăннă-кулнă, Нарспипе Сетнер ăшшăн пупленĕ чухне самана улшăнассăн та туйăнмасть. Акă Тăхтаманпа йышĕ, Михетерпе карчăкĕ курăнса каяççĕ. Вĕсен сăнĕсем сивлек те çиллес.

«Юрату юлтăр юмахра.
Эсĕ ĕнтĕ пĕчĕк мар.
Пурнас тесен ырлăхра
Пултăр мăшăру капмар», – вĕçĕмсĕр тăнлантарать амăшĕ хĕрне. Тĕпренчĕкĕн кăмăлне пачах пĕлесшĕн мар, шута та хурасшăн мар. «Эпĕ ырă курмасси пăхса витĕр курăнать», – тет Нарспи. Анчах нимĕнле сăмахпа та, куççульпе те витереймĕн мулпа чулланнă чĕрене. Ылтăнкĕмĕл йăлтăртатăвĕ хĕрĕн хуйхине курма чăрмантарать.

Туйра Нарспи трагедийĕ уйрăмах уççăн палăрать. Ашшĕ-амăшĕ, тăванĕ-пĕтенĕ, ял-йыш шăп тăрать. Пурте шыв сыпнă тейĕн.

«Ах ял-йыш, тăвансем,
Ма çапла-ши йăласем?
Куççульпе йĕрте-йĕрте
Аякка параç хĕре», – татăлса хÿхлет Нарспи. Ăна тăван тăрăхпа килтен кăна мар, юратнă савнийĕнчен уйăраççĕ. Камсем-ха? Чи çывăх çыннисемех тамăк вутне пăрахаççĕ. Никам та çăлас шухăшлă мар. Пĕртен-пĕр Сетнерте шанăç. Анчах мĕн тăвайĕ вăл пĕччен? Тăхтаман эшкерĕшĕн ăна çул çинчен сирсе пăрахасси чăрт сурассинчен те çăмăлрах.

Нарспин Тăхтаман килĕнчи асапланăвне питĕ ĕнентерÿллĕ те витĕмлĕ кăтартса панă. Режиссер ĕçĕ чăннипех те курăмлă. Мĕскĕн хĕре хĕнени, çамрăк арăм пуçĕнче усал шухăш тĕвĕленни, ăна пурнăçа кĕртни... Йăлт куç умĕнче пулса иртет. Символсем, хĕрлĕ, хура тĕссем, тумтир эрешĕсем – пĕтĕмпех вырăнлă та тарăн пĕлтерĕшлĕ.



## Фестивале хутшăнни – хăех çĕнтерÿ!

Премьерăна чăвашла пĕлмен çынсем йышлă килни те ăнсăртран мар-тăр. Эппин, кăсăкланаççĕ пирĕн литературăпа та культурăпа, ун пирки вуçех манман. Кăтарту вĕçленсессĕн те халăх саланма васкамарĕ-ха, тăвăллăн алă çупрĕ. Чылайăшĕ «Нарспие» сÿтсе явма, картинăна ÿкерекенсене тав сăмахĕ калама юлчĕ. Ыр сунăмсемпе пĕрлех сĕнÿсем те янăрарĕç залра. Вĕсенчен пĕри – фильма вырăсла куçарасси.

Андрей Васильев куракансене питех те савăнăçлă хыпар пĕлтерчĕ. «Нарспи» фильма Шупашкарти кинофестивальте (кăçал вăл çиччĕмĕш хут иртет) кăтартма палăртнă-мĕн. Малтанхи тапхăрта ăна конкурсрисен йышне кĕртесси пирки ĕмĕтленме те пултарайман çамрăк режиссер. Анчах мероприяти йĕркелÿçисем урăхларах шухăшланă курăнать. Сергей Лаврентьев киновед, фестиваль директорĕ «Нарспие» «Вак халăхсен кинематографĕ» конкурс программине кĕртме йышăннине пĕлтернĕ. Сăмах май, çĕр-шывăмăрăн наци киностудийĕсенче ÿкернĕ фильмсене кăçал уйрăм программăна уйăрнă. Çĕнтерÿçĕ ятне илессишĕн вун тăватă картина тупăшĕ. Тен, малти вырăна тухаймăпăр. Апла пулин те пăшăрханма кирлĕ мар. Пирĕн «Нарспи» кинофестивале хутшăнма тивĕç пулни – хăех çĕнтерÿ!

Наци фильмĕсене хаклакан жюрие Елена Стишова критик, кино историкĕ, «Ника» Раççей киноакадемийĕн членĕ ертсе пырĕ. Тÿресен йышĕнче çавăн пекех – Денис Осокин прозаик, поэт тата сценарист; Раççей кинематографисчĕсен союзĕн, Раççей кинокритикĕсен гильдийĕн членĕ Сергей Анашкин.

«Нарспи» фильма çу уйăхĕн 22-мĕшĕнче Наци вулавăшĕн залĕнче курма май пулĕ.

*Ольга АВСТРИЙСКАЯ.*

## Тĕлĕкре те пуканепех

Йĕпреç районĕнчи Пучинке ача садне çӳрекен Эля Пашкова канмалли кунсенче ашшĕпе тата пиччĕшĕпе пĕрле касăва тухрĕ. Тунсăх ан пустăр тесе юратнă пуканине те сумкăна чикрĕ хĕр ача.

Кăнтăр вăхăчĕ çитиччен вăл та ĕнесене сыхларĕ. Кайран вульăхсем лăплансан теттипе выляма тытăнчĕ. Люда валли вăл симĕс курăкран çемçе вырăн турĕ, минтерĕпе утиялне хатĕрлеме те манмарĕ. Акă йăлтах хатĕр пулсан ăна «сăпкана» вырттарчĕ. Шăна тавраш ан кансĕрлетĕр тесе тутăрпа витсе ячĕ.

– Шăпăртрах пул-ха, Артем, манăн пукане çывăрать. Эсĕ хытă калаçнăран вăранать акă, – асăрхаттарчĕ Эля инçех мар хутран самолет туса пĕлĕтелле вĕçтерекен пиччĕшне.

Эльăшăн икĕ кун сисĕнмесĕр иртрĕ. Çапах юлашкинчен ывăнчĕ. Пуканене те ашшĕне йăттарчĕ. Килне çитсен тӳрех вырăн çине кайса выртрĕ, хăй сисмесĕрех çывăрса кайрĕ. Каç енне шыв ĕçес килнĕрен вăранчĕ.

– Анне, эпĕ ыран садике каймастăп. Ывăннă, манăн çывăрса тăранас килет. Çавăнпа та ан вăрат. Хĕрхен мана, – тесе тепĕр хутчен тутлă ыйха путрĕ.

– Кĕтӳре çӳресси килте ларасси мар çав, – терĕ Артем ун çывăхне пырса.

– Пичче, ан чăрмантар. Кун пирки ыран калаçăпăр, – терĕ Эля.

Тĕлĕкре те симĕс улăхра пек вăл. Çывăхра вĕçсе çӳрекен сарă-кăвак лĕпĕшсене садикри тусĕсемпе ăмăртмалла хăваларĕ. Акă ывăнчĕç. Канма ларчĕç. Эля вара аллинчи пуканине çаплах ямарĕ...



## Çут çанталăк тусĕсем



Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуç ача садне çӳрекен хĕр пĕрчийĕсем Надя Шагулова, Рита Матвеева, Катя Саватьева воспитатель сăмахĕнчен нихăçан та иртмеççĕ. Вăлах вĕсене çут çанталăка юратма, аслисене тата кĕçĕннисене хисеплеме вĕрентет.

– Кайăксене хĕлле пурăнма йывăр. Çавăнпа вĕсене валли сырăш ăсталаса йывăçсем çине çакмалла. Паллах апатне – тулă, çăкăр, хĕвел çаврăнăшĕ хурса пама манмалла мар. Унсăрăн вĕçăпа шăнсах вилеççĕ вĕт. Питĕ шеллетĕп вĕсене, – тет Надя.

Рита Матвеева та кайăк-кĕшĕке, вульăх-чĕрлĕхе чунтан юратать. Çавăнпа вĕсене шурă хут çине ӳкерме хапăл.

– Çерçие, уйăпа, кăсăяна паллатăп. Курака ула куракран та уйăрма пĕлетĕп, – хăпартланать пĕчĕкскер.

– Эпĕ вара кушак çурисене юрататăп. Урамра çӳрекенсене пĕремĕк те, печени те çитеретĕп. Хăш чухне холодильникри кăлпассипе те хăналатăп. Çавăнпа манран уйрăлмаççĕ вĕсем. Эпĕ урама тухсанах ман пата чупса пырса ачашланаççĕ, – мăнаçланать Катя Саватьева.

## Хăвăртрах ӳсесчĕ

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Аксарин ача садĕнчи Милана Никитинăпа Рада Потемкина «Тетте» журналпа туслă.

– Хитре ӳкерчĕксене пăхма юрататăп. Унти ĕç-пуçа пăхса пĕчĕк çеç калав-юмах калама хăнăхса пыратăп, – мăнаçланать Милана тусĕ умĕнче.

– Эпĕ вара унти ӳкерчĕксене тĕрлĕ тĕслĕ кăранташпа сăрласа илемлетме юрататăп. Аслисем хавхалантараççĕ. «Маттур, пултаратăн», – тесе пуçран шăлаççĕ. Апла, чăн та, питĕ хастар эпĕ, – пӳлĕм тăрăх чăлтти-чалтти сиккелерĕ Рада хавасланса.

Садике çӳреме килĕштереççĕ уйрăлми туссем. Вĕсене унта йăлтах кăмăла каять.

– Апатне тутлă çитереççĕ. Яшкине те, çĕр улмине те чашăк тĕпне нихăçан хăвармастпăр. Мĕн пуррине çиекен ача кунсерен ӳсет тесе çирĕплетеççĕ килтисем, – ăнлантарать ыттисене те Милана.

– Манăн та хăвăртрах çитĕнесчĕ. Çурăм хыçне сумка çакса шкула çӳрес килет. Кашни кун «5» паллă илсе килтисене савăнтарасчĕ, – пăтта кашăкпа ăснă май сăмах хушрĕ Рада.

Хĕр ачасем иккĕшĕ те çуллахи куна килĕштереççĕ.

– Ун чухне хĕвел кунĕпех пăхать, ăшшине пире çеç парнелет, – теççĕ вĕсем хавасланса.



## Эпĕ артист пулăп, эсĕ...



Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Карапаш пуçламăш шкулĕнчи ачасем – чăн-чăн артистсем. Вĕсем кашни уявра куракана пĕчĕк спектакльпе, юрă-ташăпа савăнтараççĕ. Чи тĕлĕнмелли, сăмахĕсене час ас туса юлаççĕ пĕчĕкскерсем.

– Ӳссен артист пулăп, сцена çинчен анма пĕлмĕп, – тет хăшĕ-пĕри хавасланса.

– Артистсем апат çимесĕр пурăнаймаççĕ. Эпĕ вĕсене валли тутли пĕçерекенĕ пулатăп. Ак халь кунта поварсем янтăлаканни пеккине, – хушахуппа кĕрет иккĕмĕшĕ.

– Çĕвĕç профессийĕ килĕшет. Сцена ăстисене хитре тум çĕлетсе парăп, ялтăртатса тăраканнине. Унтан илемлĕ кĕпе тăхăнса сире курма пырăп. Спектакль хама килĕшнине пĕлтерсе хыттăн çеç алă çупăп, – хăй шухăшне палăртма манмарĕ виççĕмĕшĕ те.

*Элиза ВАЛАНС.*

**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕсем.**

# Çырас туртăм малаллах йыхравлать!

*Çу уйăхĕн 15-мĕшĕнче Чăваш патшалăх пукане театрĕнче «Хыпар» Издательство çурчĕн çамрăк корреспонденчĕсен слечĕ иртрĕ.*



Слет делегачĕсем

**Хаçат кăларас ĕç пĕрре те çăмăл мар: таçта та çитмелле, курнă-илтнĕ кăсăклă пулăмпа вулакана паллаштармалла, кĕске вăхăт хушшинчех темĕн те ĕлкĕрмелле. Юрать-ха, пирĕн çамрăк корреспондентсем пур. Вĕсем хăйсен заметкипе, сăвви-калавĕпе хаçата тата пуянрах тăваççĕ. Шкултан хыпарласах тăракан авторсене çакăншăн пысăк тав!**

Çав кун сар хĕвелĕ те ачасемпе пĕрле савăннăн туйăнчĕ. Пĕрисем иртерех килсе çитнĕ те театр умĕнче асăнмалăх сăн ӳкерĕнеççĕ. Теприсем шаларах иртсе хаçатсемпе, стендсемпе паллашаççĕ. Савăнăçĕ те, хумханăвĕ те юнашарах. Çак ачасен ĕçĕсем хаçатра тăтăшах пичетленнĕрен, вĕсен ячĕсем пирĕншĕн ют пулманран тахçанах лайăх пĕлекен туссем килсе çитнĕнех туйăнчĕ. Акă Куславкка районĕнчи Кунер шкулĕнче пĕлӳ илекен, сăвă хыççăн сăвă шăрçалакан Аня Николаева та çитнĕ. Унăн телейпе çуталакан куçĕсене курсан хĕвел тӳперен аннăн туйăнса каять. Кунта килсе курма тивĕçлĕ делегатсен списокне хаçатра курнăранпа та канăç тупаймасть-çке вăл. Халĕ вара пĕрешкел чун киленĕçлĕ тантăшĕсене тĕл пулнипе тата ытларах хавхаланса ĕçлĕ.

Шкулсене тухса çӳренĕ чухне асăрханă сăнсене кунта тепĕр хут курма мĕн тери кăмăллă. Ачасем хăшĕ амăшĕпе, хăшĕ вĕрентекенĕпе килнĕ. Шупашкар районĕнчи Ишек шкулне çӳрекен Катя Петровăпа Софья Андреева та кунта хаваслă кăмăл-туйăмпа çитнĕ. Екатерина Ивановна Григорьева, вĕренекенĕсемшĕн ырми-канми тăрăшаканскер, вĕсен кашни çитĕнĕвĕшĕн ача пек хĕпĕртет. Çак слета килме пултарнишĕн те калама çук савăнать.

– Питĕ лайăх уяв. Чăнах та, калама çук пысăк ĕç турăр эсир. Çырас кăмăллă ачасене çапла хавхалантарни мĕн тери аван, – тет вăл.

Çиччĕмĕш класри Катя Петрова çырассипе кăна мар, ытти енĕпе те пултаруллă. Шкулта лайăх вĕренет, каланине ялан итлет. Килте сăвă çырма хушса ярсанах çак ĕçе пĕтĕм кăмăлтан пурнăçлать. Пĕрремĕш класри Софья Андреева вара класри питĕ хисеплĕ çын – староста. Арçын ачасем унăн сăмахĕнчен иртеймеççĕ. Нумаях пулмасть амăшĕпе иккĕшĕ чăваш ар çынĕн кĕпине тĕрленĕ те пин тенкĕлĕх сертификат çĕнсе илнĕ. Мĕн тери маттур!

Слет хыççăн вара Екатерина Ивановна уявра хатĕрленĕ сăн ӳкерчĕксенчен презентаци хатĕрленĕ те ăна класри ытти ачасене кăтартнă, ăçта кам сăнланнине ăнлантарса панă. «Эпĕ те çыратăп!» – тенĕ Ариадна Андреева тӳрех.

– Пĕррехинче Ариадна сăвă çырса килсе пачĕ. Çавна тӳрлеткелерĕм те район хаçатне ярса патăм. Пичетленчĕ! Хĕр ача питĕ хавхаланчĕ. Ăна кура ыттисем те çырасшăн. Мĕнле те пулин тема тупса памалла кăна вĕсене, кайран хăйсемех ĕçлеççĕ, – пуплеве малалла тăсать Е.И. Григорьева. «Хыпар» Издательство çуртне вăл çак уявшăн чĕререн тав тăвать. Тарăн шухăшлă спектакль те кăмăлне кайнă, кайран урокра çак тема тавра та чылайччен калаçнă.

Вăрмар районĕнчи Пысăк Енккасси шкулĕнче вĕренекен Наташа Христофорова аслămăшĕпе килнĕ. Валентина Николаевна Христофорова хăй те сăвă шăрçалать, кĕнеке те кăларнă, çавăнпа мăнукĕн пултарулăхне малалла аталантарасшăн:

– Пурнăçра лайăх çулпах ярас килет Наташăна, ырă çынсемпе ытларах хутшăнтарасчĕ. Ăшă кăмăллă та пултаруллă тантăшсем тупсан вăл хăй те вĕсем пек пулма тăрăшĕ-çке.

Наташа, чăнах та, сăвăç чунĕллĕ хĕр ача. Чечексене юратаканскер çак илеме часчасах хут çинче сăнлать. Вĕрентекен унăн ĕçĕсене тĕслĕх вырăнне илсе час-часах ытти классене кăтартать. Унсăр пуçне вăл йĕпсепе алсиш та, телефон чикмелли хатĕр те çыхать, тĕрлĕрен парне ăсталаса çывăх çыннисене савăнтарать.

Хаçата хастар çыракан Йĕпреç районĕн хĕрĕпе Катя Кошелевăпа туслашса телефонсемпе ылмашăнни те Наташăшăн мĕн тери пысăк савăнăç!

Çак кун Пукане театрĕ çамрăк корреспондентсен хаваслă сассипе кĕрлерĕ кăна. Залра пуçтарăнса ларсан чи малтан сăмах илекенĕ – ЧР информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрĕ Валентина Андреева. Вăл ачасене сăмах мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине, чăваш чĕлхин пуласлăхĕ кашнинчен килнине ăнлантарчĕ. «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ Алексей Петрович Леонтьев вара хаçатсен паянхи лару-тăрăвĕпе паллаштарчĕ. «Чун йăпатмăшне ан пăрахăçлăр!», – терĕ вăл çамрăк авторсене.

Улатăр районĕнчи Кивĕ Эйпеç шкулĕнчен килнĕ Андрей Никишинпа Петя Лубашкин иккĕшĕ те сăвă çыраççĕ. Слета килмеллине пĕлсен вĕсем пĕр тĕлĕннĕ, пĕр савăннă. Хĕпĕртесе ӳкнĕскерсем çак кун çитессе чăтăмсăррăн кĕтнĕ. Уява çитсе курни вĕсемшĕн юмах пек туйăнать. Малашне те хаçатпа туслă пулма шантарчĕç арçын ачасем.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Çĕнĕ Атикасси шкулĕнчен килнĕ Сергей Бармин çамрăк корреспондентсен слетне пĕрремĕш хут лекнĕ.

– Халĕ пĕрре килсе курнă хыççăн манăн кунта татах та пулас ĕмĕт çуралчĕ. Спектакль пуçланиччен Евгений Суховерко пирĕнпе ăсталăх урокĕ ирттерчĕ. Вăл хаçатăн кирлĕ пайĕсем çинчен каласа пачĕ, тĕслĕх кăтартрĕ. Ку пулăм яланлăхах асра юлĕ. Тавтапуç хаçатра ĕçлекенсене! – терĕ вăл хавхалануллăн, малашне тата ытларах çырма шантарчĕ. Çак районти Мăн Этмен шкулĕнчен килнĕ Аня Михеева та уявпа кăмăллă. Хаçатра ĕçлекенсемпе калаçни, хăйĕн пек çыракан ачасемпе паллашни мĕн тери пысăк савăнăç уншăн! Тепĕр çул та çак слета хутшăнма ĕмĕтленет.



Çамрăк фотоăстасем



Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Çĕн Атикасси шкулĕн хастар юнкорĕсем Сергей Барминпа Дима Ильин

Уйрăмах хастаррисем «Хыпар» Издательство çурчĕн ачасемпе çамрăксен кăларăмĕсемпе туслă çыхăну тытнăшăн Тав хучĕсене тивĕçрĕç. Акă вĕсем, маттур авторсем:

1. Галина Вячеславовна ЗОТОВА (Хĕрлĕ Чутай районĕ, Штанаш шкулĕ);
2. Надежда Алексеевна ЕВДОКИМОВА (Йĕпреç районĕ, Чăваш Тимеш шкулĕ);
3. Николай Степанович ВАСИЛЬЕВ (Тăвай районĕ, Элпуç шкулĕ);
4. Любовь Германовна АДЮКОВА (Елчĕк районĕ, Аслă Елчĕк шкулĕ);
5. Юлия АДЮКОВА (Елчĕк районĕ, Аслă Елчĕк шкулĕ);
6. Эльвира Федоровна МОИСЕЕВА (Çĕрпӳ районĕ, Чурачăк шкулĕ);
7. Диана МОИСЕЕВА (Çĕрпӳ районĕ, Чурачăк шкулĕ);
8. Надежда Валериановна СЕРЕБРЯКОВА (Етĕрне районĕ, Палтай шкулĕ);
9. Юлия Васильевна КОШЕЛЕВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх шкулĕ);
10. Инесса ШАШКИНА (Элĕк районĕ, Мăн Вылă шкулĕ);
11. Алита ИГНАТЬЕВА (Канаш районĕ, Ешкилт шкулĕ);
12. Алина ТРОФИМОВА (Вăрмар районĕ, Шăхаль шкулĕ);
13. Наталья КАЛАШНИКОВА (Канаш шкулĕ).

«Тантăшпа» «Тетте» редакторĕ Владимир Федоров, «Самант» редакторĕ Владимир Степанов, «Çамрăксен хаçачĕн» редакторĕ Дмитрий Моисеев тата Раççейри çамрăк журналистсен лигин Чăваш Енри координаторĕ Евгений Суховерко ăсталăх урокĕсем ирттерчĕç. Çак самантпа усă курса ачасемпе тата вĕрентекенсемпе пуплев йĕркелеме питĕ меллĕ пулчĕ. Кашниех хăйĕн шухăшне пĕлтерме васкарĕ.

«Турă патне çырнă вун тăватă çыру» спектакль ачасене ырра вĕрентет. Çак темăпа вĕсем халĕ шкулта та чылай калаçĕç-ха.

Слет иртсе кайрĕ, редакци почтине вара кунсеренех ачасем хавхаланса шăрçаланă тав çырăвĕсем килеççĕ. Пирĕн туслăх нихăçан та ан татăлтăрччĕ. Тепĕр слетчен хастар авторсем тата йышланасса шанатпăр!



Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕкри Адюковсен те министрпа тата "Хыпар" И.Ç. директорĕпе-тĕп редакторĕпе канашламалли тупăнать



Юмахри сăнарсем уява хаваслăх кĕртрĕç



Хаçат-журнал интереслĕ пултăр тесен хăш чухне хĕрӳ те калаçма тивет

*Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

# Алă усса ларма юратман Хĕрлĕ Чутайсем



**Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Хĕрлĕ Чутай шкулне тĕрлĕ ялта пурăнакан пилĕк çĕре яхăн ача çул такăрлатать. Кунта çитĕнекен ăру валли тĕрлĕ енлĕн аталанма пур услови те пур: ачасем физкультура урокĕнче эрнере пĕр хут физкультурăпа спорт комплексне çӳреççĕ, тĕрĕс ишес енĕпе хăнăхаççĕ. Унсăр пуçне арçын ачасене вăтам класранах салтак пурнăçне хатĕрлеççĕ. Шкулта кашни çулах «Пирĕн хушăмăрти талант» конкурс иртет. Пур ача та сцена çине тухса хăйĕн пултарулăхĕпе паллаштарать. Чылай ялти ашшĕ-амăшĕ хăйĕн пепкине районти тĕп шкула яма тăрăшать. Ачасем парта хушшинче ларнă вăхăтрах пулас пурнăçра мĕнле професси суйлассине палăртса ăна пурнăça кĕртмелли самант патне ăнтăлаççĕ: тĕрлĕ кружок-секцие ăсталăха туптама çӳреççĕ. Алă усса ларма юратмаççĕ Хĕрлĕ Чутайсем!**

## Кашни кун çур сехет кĕнеке вулать

Пĕрремĕш класра вĕренекен Богдан Ярайкин анлă тавра курăмлă ача.



Тăрăшса вĕренет кăна мар, тĕрлĕ конкурс-викторинăна хутшăнать, унта яланах малти вырăнсене йышăнма ăнтăлать. "Чĕвĕлти чĕкеç", "Русский медвежонок" вăйăсене кăмăллать. Нумаях пулмасть Богдан республикăра ачасем хушшинче иртнĕ "Чи телейлĕ кун" конкурсра пĕрремĕш пулнă. Çуллахи пĕр кун амăшĕпе пулă тытнине ӳкернĕ. Богданăн шухăшĕпе çывăх çын çумра пулни – чăн-чăн телей! "Манăн Хисеп хучĕ нумай! Пурте пĕрремĕш, иккĕмĕш вырăнсене тивĕçнипе панăскерсем. Эпĕ нихăçан та виççĕмĕш пулмастăп", – йăл кулать арçын ача.

Вĕрентекенсем те Богдан анлă тавра курăмлă пулнине çирĕплетеççĕ. Вăл кашни урока тĕплĕн хатĕрленет, юлташĕсене те вăл е ку ыйтупа пулăшма тăрăшать. Унăн юратнă предмечĕ – математика. Çак туртăм пĕчĕккренех аталаннă иккен. Богдан икĕ çултах пĕрре çумне иккĕ хушсан виççĕ пулнине пĕлнĕ. Тăватă çулта вара тата пысăкрах числосене хушма-кăларма вĕренсе çитнĕ. Халĕ те пример-задачăсене кĕске хушăра шутласа кăларма пултарать вăл.

Пур çĕре те ĕлкĕрекен Богданăн пушă вăхăт пур-ши? "Паллах, пур!", – хуравлать арçын ача. Çур куна шкулта иртерет пулсан – ыттине килте. Чылай чухне юмах, кĕске калав "шĕкĕлчеме" кăмăллаканскер кашни кунах çур сехет кĕнеке вулать. Унтан сăмах каçмăш тупсăмĕсене шырать, мультфильм курма телевизор умне пырса ларать.

– Мультфильма вунă минутран ытлашши пăхма юрамасть! Куç япăх курма пуçлать, – ăнлантарать пĕрремĕш класра вĕренекенскер.

Канмалли кунсенче арçын ача амăшĕпе пĕрле кӳршĕ ялта пурăнакан кукамăшĕ патне хăнана çӳрет, хуçалăхра пулăшать. Уроксем хыççăн вара физкультурăпа спорт комплексĕнче вадокай енĕпе ĕçлекен секцие çӳрет.

Мал ĕмĕтлĕ Богдан ӳссен тухтăр профессине алла илесшĕн.

– Хирург пулăп, çынсене чир-чĕртен сыватăп, – пĕлтерет пĕрремĕш класра вĕренекен арçын ача.

## Спорт мастерĕ пулма ĕмĕтленекен Артем

Артем Чеченешкин вара пурнăçне шахмат вăййисĕр курмасть. Ахăртнех, тĕлĕкре те шахматла вылять пулмалла. Тăхтав вăхăтне яланах чун киленĕçĕ валли уйăрать вăл. Тăваттăмĕш класра вĕренекен арçын ача шахматла выляма пуçлани икĕ çул çитет ĕнтĕ. Вăл физкультурăпа спорт комплексĕнчи «Хастар» кружока çӳресе выляс ăсталăха туптать. Малтанах Артем унта юлташĕсемпе çӳренĕ, кăшт вăхăт иртсен арçын ачасем кружока пăрахнă. Шахматла выляма кăмăллакан Артем вара юлнă.

Арçын ача районта иртекен кашни турнира хутшăнать, яланах призерсен шутне кĕрет. Пĕлтĕр вăл Çĕмĕрлене те çитнĕ, унта та малти вырăна тухма пултарнă.

Пушă вăхăтра та Артем асамлă кӳлепесен тĕнчине "путать". Унăн çак вăйă пирки çырнă ятарлă журнал та пур. Арçын ача кашнинчех выляв техникине пăхса тухса



пĕччĕнех кусăмсем тăвать. «Шахмат килĕшет. Тен, çак енĕпе спорт мастерĕ пулăп?», – пĕлтерет Артем Чеченешкин.

## Унăн ĕçĕсемпе куравра паллашаççĕ

«Шел, пирĕн шкулта вĕтĕ шăрçапа ĕçлеме вĕрентекен кружок ĕçлемест. Темиçе çул каялла пурччĕ вăл. Анчах ăна ертсе пыракан учитель Мускава пурăнма куçса кайрĕ. Кружока хупрĕç», – сăмах хушрĕ 9 «б» класра ăс пухакан Аня Родионова.

Халĕ хĕр ача бисерпа хăй тĕллĕн ĕçлет. Чылай чухне ятарлă журналта, кĕнекере, хăш чухне Интернетра тĕрлĕ сĕнĕве пăхса илемлĕ япала ăсталать Аня. Тăваттăмĕш класрах интересленме тытăннă вăл кунпа. Бисера алла илсенех чун каннăн туйăннине пĕлтерет хĕр ача. Кунĕпе те вĕтĕ шăрçаран вак-тĕвек ăсталаса ларма пултарать вăл. Мăй çакки, хăлха çакки, Фаберже çăмартине, чĕр чун кĕлеткисене çăмăллăнах хатĕрлет.

Чун киленĕçĕ валли вăйне шелленменскер бисерпа ĕçлесси сывлăхшăн сиенлĕ те пулнине лайăх пĕлет-ха. Вĕтĕ шăрçапа тăтăш ĕçлесен пула куç вăйĕ чакать. Çавăнпах Аня яланах çутă пӳлĕмре ларать, тĕрлĕ япала хатĕрлет.

– Ман шутпа, бисертан илемлĕ япала ăсталама пултарни каçхине урамра пĕр тĕллевсĕр çӳренинчен лайăхрах. Паллах, уçă сывлăшра та çӳреме вăхăт тупмалла. Çав-çавах вĕтĕ шăрçапа ĕçленине нимĕн те çитмест, – ăнлантарать Аня Родионова. – Малтанах Шупашкарти ятарлă лавккасенче илеттĕм, халĕ пирĕн районта та çавнашкаллисем уçăлчĕç. Куншăн савăнатăп çеç!

Районти культура çуртĕнче иртекен кашни куравра Аньăн ĕçĕсемпе паллашма пулать. Шкул ачисем те, вĕрентекенсем те, ял-йыш та унăн илемлĕ япалисене курса савăнать. Пилĕк çул çак иленӳпе кăсăкланакан Аня малалла та ăсталăха аталантарасшăн, çĕнĕрен те çĕнĕ «капăрлăх» хатĕрлесшĕн çунать.

## Çывăх çыннисен çулĕпе каясшăн

"Лаша пуласси тихаран, çын пуласси ачаран паллă", – теççĕ ваттисем. Чăн та, пурнăçра "пысăк" çын пулас тесен нумай тăрăшмалла. Вĕренӳре çеç ĕлкĕрмелле мар, тĕрлĕ енлĕн аталанмалла. 11-мĕш класра вĕренекен Костя Савельевпа Кирилл Ярайкин ачаранпах спортпа туслă. Паллах, кунта çывăх çыннисен тӳпи пысăк. Каччăсен ашшĕсем те çамрăклах спортпа интересленнĕ, халĕ те сывă пурнăç йĕркине пăхăнса пыраççĕ. Костьăпа Кирилл пиллĕкмĕш класра вĕреннĕ вăхăтрах спортăн тĕрлĕ тĕсĕпе тĕплĕн хатĕрленме пуçланă: чупассинче, тĕл пересссинче... вăй виçнĕ. Малтанах яшсем "Зарница" вăйăра шкул чысне хӳтĕленĕ, унтан Спартакиадăсене хутшăнма тытăннă. Çавăн чухнех республикăра, Атăлçи округĕнче иртекен ăмăртусене тухса çӳренĕ, малти вырăнсене йышăннă. Пĕлтĕр Хĕрлĕ Чутай команди Анат Камăра иртнĕ ăмăртура виççĕмĕш пулнă.

Хальхи вăхăтра Костьăпа Кирилл патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменĕсене тытмашкăн хатĕрленеççĕ, çапах чун киленĕçĕ валли пушă вăхăт уйăраççех. Кашни кун футболла, волейболла выляççĕ вĕсем. Костя вара гитара каласа юрлама та вăхăт тупать.

Шкулпа сыв пуллашсан каччăсен иккĕшĕ те çывăх çыннисен çулĕпе каясшăн: Кирилл çар çынни, Костя полици ĕçченĕ пуласшăн. Эппин, вĕсене экзаменсене лайăх тытма ăнăçу сунар!

## Ăста юрăçсенчен те кая мар

Шкулта çамрăк юрăç та чылай. Пурте тенĕ пекех музыка шкулне çӳреççĕ вĕт. Акă, виççĕмĕшсенех илер. Районти, шкулти пĕр мероприяти те вĕсемсĕр иртмест. Пĕри тепринчен илемлĕрĕх юрлать кунта. Ачасем кашнинчех республика шайĕнчи конкурссене хутшăнаççĕ. Маша Аливанкина, акă, «Ылтăн кĕркунне» конкурсра «Соло» номинацире малти вырăна тухнă, унăн юлташĕсем – Ангелина Сазоновăпа Екатерина Ейкова – фортепиано каласа Хисеп хучĕсене тивĕçнĕ.

– Пĕррехинче шкултан таврăннă чухне юлташăм музыка шкулне çӳренине каласа пачĕ. Манăн та унта каяс ĕмĕт çуралчĕ. Эпĕ ун чухне пĕрремĕш класра вĕренеттĕм, – тет Ангелина Сазонова. – Ача чухнех асатте телевизор ярса фортепиано калакансен, музыкантсен концерчĕсене кăтартатчĕ. Килĕшнĕрен эпĕ те фортепиано класне çӳреме тытăнтăм.

Музыка учителĕ Валентина Иосифовна Грачева та виççĕмĕшсемпе кăмăллă. Ачасем тĕрлĕ конкурсра хутшăннишĕн савăнать вăл. Киле ĕç юрă сăмахĕсене вĕренме парсан, тепĕр урокра пурте пăхмасăр калаççĕ. Ачасем музыка шкулне çӳрени ашшĕ-амăшĕнчен те нумай килет. Юрра-ташша кăмăллакан çемьесем хавасах пепкисене музыка шкулне çырăнтараççĕ. Çавнашкал çемьере Маша Аливанкина та çитĕнет.

– Эпĕ ачаранпах юрлама юрататăп. Манăн атте те музыкăна кăмăллать. Вăл гитара калать, юрă шăрантарать. Пĕр концертра эпир унпа иксĕмĕр юрласа пурне те тĕлĕнтертĕмĕр, – савăнса пĕлтерет хĕр ача. – Уйрăмах савăк юрăсене шăрантарма кăмăллатăп эпĕ. Малалла та пултарулăха аталантарăп!



Ирина КОШКИНА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.

# "Никама та манман, нимĕн те манăçман" акци

"Никама та манман, нимĕн те манăçман" акципе килĕшӳллĕн "Раççейри ветерансен союзĕн" Чăваш Республикинчи уйрăмĕ пулăшнипе Шупашкарти 56 -мĕш шкулта вĕренекенсемпе çамрăк армеецсем Сĕнтĕрвăрри районне çитсе курчĕç. Çу уйăхĕн пуçламăшĕнче организаци председатель çумĕпе Владимир Иванович Константиновпа шкулти социаллă педагог Наталья Валерьевна Титушина шкул ачисемпе пĕрле Октябрьски, Шĕнĕрпуç ялĕсене пулчĕç.

Октябрьски шкулĕнче ОБЖ предметне вĕрентекен Владимир Федотович Кураков ертсе пынипе акцие хутшăнакансемпе шкул кадечĕсем Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче пуç хунисене асăнса вырăнти палăк умне чечек кăшăлĕ хучĕç. Кайран шкул ачисем ялти масар çинче пулчĕç. Унта вăрçăра пулнă вун пĕр ентешĕн вил тăприне тасатса тирпейлерĕç.

56-мĕш шкул та вĕренекенсемпе Шĕнĕрпуç шкулĕн ачисем палăк умне чечек кăшăлĕ хурса вырăнти масара тирпей кĕртрĕç. Кайран шкулта РФ Патшалăх думин председатель çумĕпе, икĕ хут Хĕрлĕ Çăлтăр ордена, "Çапăçури паллă ĕçсемшĕн" медале тивĕçнĕ Василий Ильич Архиповпа тĕл пулу иртрĕ.

Октябрьскинчех шкул ачисем тĕл пересспе ăмăрту йĕркелерĕç. Хутшăннисемпе çĕнтерӳçĕсене Хисеп хучĕсемпе чысларĕç.

*Владимир КОНСТАНТИНОВ.*

# «Ăшă сăмахшăн тав»




Пирĕн садик «Парăс» ятлă. Унта çулталăк çурăран пуçласа шкула кайма хатĕрленсе çитнисем хаваспах çӳреççĕ. Мĕнле кăна мероприяти йĕркелеместпĕр пулĕ эпир кĕçĕннисемпе! Уявра никама та чысламасăр, саламламасăр хăвармастпăр. Ачасем ашшĕамăшне, çĕр-шыв хӳтĕлевçисене, ветерансене хăйсем патне тăтăшах йыхравлаççĕ. Чăваш халăх йăли-йĕркине те манăçа кăларасшăн мар пĕчĕккисем. Садикре çулленех çăварни, Мăн кун тата ытти уява ирттерессĕ. Ачасем те вĕсене хаваспах хутшăнни савăнтарать. Пепкесем сценкăсенче выляççĕ, юмах сыпăкĕсене куракан умĕнче лартаççĕ.

Нумаях пулмасть аслă ушкăн ачисем «Зарница» çар вăййине хутшăнса юрă-ташăпа, сăвăпа савăнтарчĕç. Уйрăмах хĕр ачасем шăрантарнă «Катюша» юрă, çамрăк матроссен ташши, «Тальяночка» ташă куракансен кăмăлне кайрĕ. Пурте пĕрле вăрçăра пуç хунисене асăнса лартнă палăк умне чĕрĕ чечексем хуни нумайлăха асра юлчĕ, чун-чĕрере паттăрлăх туйăмĕ çуратрĕ.

Маттур ачасем хăйсен пултарулăхĕпе Упи ял администрацийĕ Çĕнтерӳ кунне халалласа ирттернĕ уявра та савăнтарчĕç. Вĕсен саламĕ ветерансен, ватăсен кăмăлне самаях çĕклерĕ. Аслисем: «Ăшă сăмахшăн тав», - тесе савăннине пĕлтерчĕç.

*Лилия ВАСИЛЬЕВА, музыка ертӳçи,*
*Алина ИВАНОВА, воспитатель.*

Красноармейски районĕ,
Упи.

**Сăн ӳкерчĕкре:** уяв саманчĕ.

# Балтон вилĕмсĕр ячĕ

1925 çул пуçламăшĕнче Аляска штатĕнчи Ном хулинче ачасен пыр чирĕ анлă сарăла пуçланă. Больницăсенче укол тумалли эмел пулман. Çынсем телеграфпа çыхăнса Анкориджра кăшт вакцина юлнине пĕлнĕ. Хула Номран чылай аякра вырнаçни пăшăрхантарнă. Çил-тăвăл алхаснине пула самолетсем вĕçмен. Вакцинăна Ненана хулине çити поездпа илсе килме шутланă, унтан вара – йытăсем кӳлнĕ лавпа. Йытăсем çил-тăвăла хирĕç чупнă, вăйĕ пĕтнисем çул çинчех выртса юлнă. Ненана хулине пĕрремĕш Гунар Кассенăн йыттисем çитнĕ. Вĕсене ертсе пыраканĕ Балто ятлă йытă пулнă. Эмелсене илсен Гунар Кассен хăйĕн йыттисене каялла çавăрнă, часрах вакцинăна киле илсе çитерме васканă. Анчах та çул çинче Гунар питĕ вăйлă шăннă, çавăнпа та йытăсене ертсе пырайман. Вăл çакăншăн питĕ пăшăрханнă, ачасене эмелсĕр хăварасран хăранă. Малта пыракан Балто каялла таврăнмалли çула лайăх пĕлнĕрен хăйĕн тусĕсене Нома ертсе кайнă. Йытăсем питĕ ывăннă пулин те, эмеле больницăна илсе çитернĕ. Балто, чăн та, пысăк ĕç тунă: пепкесене вилĕмрен сыхласа хăварнă!

Балто 1933 çулта вилнĕ. Юлашки çулĕсене вăл зоопаркра пурăнса ирттернĕ. Унăн кĕлеткине Кливленд музейĕнче вырнаçтарнă. Нью-Йоркри тĕп паркра Балто ячĕпе лартнă палăк та пур. Паянхи кун та Аляскăра Балто ырă ĕçĕ пирки аса илеççĕ, ун пирки çитĕнекен ăрăва каласа параççĕ.




## ПИРĔН ПУЛТАРУЛĂХ

### Пире вăрçă кирлĕ мар!

Сар хĕвеллĕ çу пуçланчĕ,
Гитлер тухрĕ вăрçăпа.
Халăх питĕ ир вăранчĕ
Бомба ӳкнĕ сасăпа.

Çумăр евĕр тăкăнаççĕ
Пульăсемпе снарядсем.
Нихăçан асран тухмаççĕ
Чи асаплă вăхăтсем.

Халăха чĕнсе калатăп:
Пире вăрçă кирлĕ мар!
Кăвак пĕлĕт таса пултăр,
Миршĕн пурте тăрăшар!

*Наташа ХРИСТОФОРОВА,*
*7 «б» класс.*

Вăрмар районĕ,
Пысăк Енккасси шкулĕ.

### Тав сире!

Хаяр та тискер, ирсĕр вăрçă пуçланнă.
Унта та кунта ӳлени, макăрни.
Мăн кукаçи те хутаç пуçтарнă:
Чикнĕ çăкăр, тăвар, çĕр улми...

Телейсĕр куçĕсем кукамайăн
шывланнă.
Эх, хурланнă чĕри... Эх, хуйхи
чăтайми...
Сак тулли ачине кукаçи çупăрланă:
«Çĕнтеретпĕр пĕрех! Çакă кун
манăçми...»

Асап тӳснĕ, çапах халăх пур пĕр
çĕнтернĕ,
Фашиста çапса тăкнă тĕпрен ним
юлми.
Тайма пуç, кукаçи, пурнăç пулнăшăн
мирлĕ!
Тав сире эпир пуршăн, тав ниçта
шăнăçми!

*Ксения НИКОЛАЕВА,*
*2 класс.*

Канаш районĕ,
Катек шкулĕ.

### Тав сире, асаттесем!

Çитрĕ акă паллă кун –
«Çĕнтерӳ уявĕ» тетпĕр.
Чыслама туртать-и чун?
Палăк умĕнче кĕтетпĕр.

Тав тăватпăр, ыр сунатпăр,
Сирĕнпеле мухтанатпăр.
Чĕрери сăмахăмсем –
Сирĕншĕн, ветерансем!

Тав сире, асаттесем,
Çутă пулнăшăн кунсем,
Тăшманран хăтарнăшăн,
Ирĕкри малашлăхшăн!

*Иван ЗАЙЦЕВ,*
*5 класс.*

Вăрнар районĕ,
Калинино шкулĕ.

# «Чиперук» – хĕр упраç страници

МОДА

Сивĕ хĕл кунĕсем тахçанах иртсе кайрĕç ĕнтĕ. Çулла та çитрĕ. Апла пулсан çĕнĕ тумтир суйлама вăхăт. Пирĕн, çамрăксен уйрăмах çи-пуçа тимлĕх уйăрмалла-çке, модăпа килĕшӳллĕн тумланма пĕлмелле.

Кăçалхи çуркуннепе çулла еплерех капăрланмалла-ши? Мĕнле тум модăра-ши? Мĕн тĕсли? Мĕнлерех стильпе çĕлет-терни вырăнлă-ши? Тĕрлĕ ыйту пăшăрхан-тарать пире, пикесене.



## Тĕрлĕ тĕслĕ тумпа

Мода кашни çул улшăнать, çулталăкăн тĕрлĕ вăхăтĕнче расна вăл. Сăмахран, пĕлтĕрхи çулла ура тупанĕ таран вăрăм сараппан, юбка-кĕпе тăхăннă пикесене асăрхама май килнĕ. Кăçал вара паллă модельерсем чĕркуççирен кăшт вăрăмраххине сĕнеççĕ. Вĕтĕ хутламлă (плиссированная) юбка е кĕпе те каллех модăра. Вĕсем кашнийĕн шифоньерта пулмаллах. Вăрăмăшĕ тĕрлĕрен. Хăвăрăн кĕлеткепе килĕшӳллĕ çеç курăнтăр тата меллĕ пултăр.

Хальхи вăхăтри ташăпа, музыка жанрĕпе (ытларах поп-культурăпа) тата ыттипе кăсăкланакан çамрăксем валли тĕнчипе паллă дизайнерсем уйрăм тум коллекцийĕ шухăшласа кăларнă. Унта кĕске топ, нумай сийлĕ юбка, спорт стилĕпе çĕлетнĕ шортă, тĕрлĕ ӳкерчĕклĕ футболка, леггинсăсем, йăлтăркка шултăра çаврашкасемпе илемлетнĕ е "бэби-долл" кĕпе кĕртнĕ. Çак кĕпе моделĕ чылай лавккара та, пасарта та сутура тĕл пулать. Тĕсĕ вĕсен тĕрлĕрен. Унăн вăрăмăшĕ чĕркуççинчен çӳлерех, кĕске çанăллă е пачах çанăсăр, кăпăш аркăллă, пилĕк тĕлĕ кăшт çӳлерех. Ку кĕпе хĕр ачасемпе хĕрсене капăр пукане евĕр кăтартать, ахальтен мар-çке "бэби-долл" "пукане" сăмахпа куçать.



Романтика стилĕ те кăçалхи çу кунĕсемшĕн питех те вырăнлă. Классика шăлаварĕ, шортă, ар çын кĕпи, жакет тăхăнсан та килĕшӳллĕ пулĕ. Чечексемпе, фотоколлажпа, хăйне евĕр тĕлĕнтермĕш ӳкерчĕкпе илемлетнисене суйлăр çеç.

Джинсран çĕленĕ тумтир вара яланхиллех модăра. Гардеробра джинс кĕпе, сараппан, юбка, шăлавар, костюм тата ытти те пулсан аван. Çак пусмаран çĕленĕ кĕпе-йĕм çулталăкăн кирек мĕнле вăхăтĕнче те модăран тухмасть.

Çутă симĕс, çутă кăвак, çутă кĕрен, сăрă, ӳт тĕслине тата ытти тĕсĕн шупкарах е çутă сĕмĕсене тимлемелле. Хĕрлĕ, шурă тата хура тĕс пирки те ан манăр. Çак виçĕ тĕсрен пĕри те пулин тум пайĕсенче пулмаллах. Вĕсене пĕрлештерсе те тăхăнма юрать. Тĕслĕхрен, хура шăлаварпа хĕрлĕ блузка, хĕрлĕ кĕпепе хура е шурă туфли, шурă кĕпепе хура пиçиххи тата ытти те.

Умра ăшă та асамлă çу кунĕсем. Вĕсем пире савăнăç та хаваслăх парнелессе кашни шанать. Илемлĕ тумпа вара пушшех те хитре курăнăпăр.

## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР!

***Сан пата тусусем килессине пĕлтерчĕç-и? Килте вара чей ĕçме сĕтел çине лартма нимех те çукпа пĕрех. Мĕн тумалла? Вăхăта сая ямасăр çак пылак çимĕçе хатĕрлер. Вăл пурин кăмăлне те каясса шанатпăр.***



### Вĕретнĕ сĕтрен – ириска

**Ăна хатĕрлеме 200 миллилитр вĕретнĕ сĕт, 150 е 200 грамм сахăр песокĕ, 2 апат кашăкĕ пыл, пĕр кашăк услам çу, 1 пачка ванилин кирлĕ.** Пур çимĕçе те кастрюле ямалла, ăшă сĕт хушмалла. Савăта газ çине лартмалла. Вăйсăртарах (вăтам) çулăм çинче çур сехет пек пăтратса пĕçермелле. Хатĕр çимĕç çăра тата карамель тĕслĕрех пулмалла. Ăна пăр шăнтмалли савăта (формочки для льда) ярса çур сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла. Халĕ вара техĕмлĕ чей е кофе пĕçерсе сĕтел хушшине вырнаçма та юрать.

### "Çуркунне" салат

**Çак тутлă та сĕтеклĕ салата хатĕрлеме хăвăра кирлĕ чухлĕ краб ашĕ, хытă сыр, тăварланă хăяр, консервланă симĕс пăрçа тата майонез илĕр.**

Пур çимĕçе те çӳхе улăм пĕрчи евĕр туратпăр та симĕс пăрçапа, майонезпа пăтрататпăр. Тăвар хушма кирлĕ мар. Салат хатĕр те. Апачĕ тутлă пултăр!

### Чăх какайĕнчен – шашлăк

**Шашлăк валли пĕр килограм çурă чăх ашĕ (пĕçĕ тĕлĕнчи пулсан аванрах), 4 пуç сухан, кăшт тăвар, вĕтетнĕ хура пăрăç, икĕ кашăк 9 процентлă уксус, 7-8 çĕр улми кирлĕ.** Какая вăтам татăксем туса ваклатпăр та тăварпа, пăрăçпа, çаврашкаласа туранă суханпа тата уксуспа хутăштарса 1-2 сехет маринадлатпăр.

Çĕр улмине хуппинчен тасататпăр, хулăнрах çаврашкасем туса касатпăр та тимĕр ывăса хуратпăр. Хатĕр какая йывăç патаксем çине суханпа пĕрле тирĕнтерсе çĕр улми çийĕн вырнаçтаратпăр.

Шашлăка хĕртнĕ духовкăна çур сехете лартатпăр. Какай хĕрелсен ăна çавăрса хуратпăр. Вăл пур енчен те ăшаланса хĕрелмелле.

Килти шашлăк хатĕр те. Апачĕ тутлă пултăр!

### Купăстаран – техĕмлĕ катлет

**Катлет валли çур кило ĕне е сысна ашĕ (е икĕ тĕрлине те пĕр виçепе), çавăн чухлех купăста, 3 çăмарта, 2 пуç сухан, тăвар, пăрăç тата ыхра кирлĕ.**

Купăстана, какая, суханпа ыхрана аш арманĕпе авăртмалла. Унтан хăвăра кирлĕ чухлĕ тăварпа пăрăç тата çăмарта хушса лайăх хутăштармалла.

Катлетсем туса ятарлă сухарипе йăваламалла та çу сĕрнĕ, хĕртнĕ çатмара ăшаламалла.

### "Алла" салат

**Ку салат валли пĕçернĕ çĕр улми, кишĕр, пуçлă сухан, тăварланă хăяр, пулă шпрочĕ, çăмарта, чăх какайĕ, сыр илĕр.**

Çимĕçсене шултăра тĕркăпа кăларса сийпе хурăр: малтан çĕр улми, унтан кишĕр, сухан, хăяр, пулă шпрочĕ, çăмарта шурри, çĕр улми, чăх какайĕ, сыр, çăмарта сарри. Кашни сий хыççăн майонез сĕрĕр.

### «Бавари» салат

**Çимĕçе хатĕрлеме 5-6 сосиски, 2 помидор, 200 грамм хытă сыр, симĕс сухан, майонез, тăвар илмелле.**

Сосискисене 10 минут пĕçермелле, сивĕнсен хуппинчен уйăрмалла. Помидорпа сыра тăваткăлласа турамалла та савăта ямалла. Вĕтетнĕ симĕс сухана, унтан çавракан каснă сосискисене хушмалла. Хыççăн тăварпа тата майонезпа пăтратмалла.

*Нина ЦАРЫГИНА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.*

# Тӑлӑха юлнӑ кашкӑр ҫурисем

– Паян урамра сивӗ. Шултра юр ҫӑвать. Пӗр ҫын та курӑнмасть. Асатте мӗнле ҫитӗ-ши? – терӗ хуйха путнӑ Стасик.

– Ан хуйхӑр, асатте часах ҫитет. Вӑл тӑманран та, юртан та хӑрамасть. Вӑл – чи вӑйли, чи хастарри, – лӑплантартӑм шӑллӑма.

Стасик сӗтел ҫумӗнчи пукан ҫине кайса ларчӗ. Акӑ алӑк сасси илтӗнчӗ. Шӑллӑм пукан ҫинчен тӑрса кухньӑна чупса кайрӗ. Анне урамран кӗнӗ иккен. Вӑл Стасике пуҫӗнчен лӑпкаса:

– Ачам, аслаҫу часах килет, ан хуйхӑр, – терӗ.

Сасартӑк алӑк яри! уҫӑлса кайрӗ те пӳрте асатте кӗчӗ. Аллинче икӗ тулли хутаҫ.

– Кӗтрӗр-им мана, мӑнукӑмсем? – эпир ун йӗри-тавра ниҫта кайса кӗрейми ҫаврӑнкалине курса йӑл кулчӗ асатте.

– Паллах, эсӗ ҫил-тӑманра аташса каясран хӑрарӑмӑр, – хуравларӗ Стасик.

Асатте малтан шӑллӑма пысӑк урапаллӑ, хӗрлӗ пӗчӗк машина тыттарчӗ, вара ман ҫума пычӗ те ыталаса илсе пысӑках мар курупка пачӗ. Хӑй симӗс тӗслӗ, йывӑр. Унта темӗнле асамлӑ япала пулнӑн туйӑнчӗ. Ҫиелти лентине салтса хӑвӑртрах хутаҫҫине сӳсе илтӗм. Хам хумханатӑп. Унта чулран тунӑ кашкӑр лара парать. Ух! Чӑн-чӑн тейӗн ӑна. Шӑлӗсем ҫивӗч. Ҫакна курнипе эпӗ ҫӳҫенсе те илтӗм. Асатте манӑн туйӑмсене асӑрхарӗ пулас, ҫавӑнпа та ӑна ҫилентерес мар тесе парнешӗн савӑннӑ пек кӑтартрӑм.

– Асатте, тавах сана! Ку питӗ илемлӗ парне, – терӗм ӑна ыталаса.

– Мӑнукӑм, ку кашкӑра эпӗ Елюк тесе чӗнетӗп. Хампа пулса иртнине аса илнипе илтӗм эпӗ ӑна, – пӗлтерчӗ асатте.

– Асатте, лар-ха, каласа пар апла, – йӑпатрӑм ӑна.

Иксӗмӗр диван патне утрӑмӑр.

– Эпӗ ун чухне ҫамрӑкччӗ, – калаҫӑвне пуҫларӗ асатте. – Мускавран инҫех мар вӑрманта ӗҫлеттӗм. Паянхи пек ас тӑватӑп вӑл вӑхӑтри илемлӗ вырӑнсене. Унта питӗ хитре. Ытарайми илемлӗ вӑрман. Эпир ӗҫленӗ вӑхӑтрах чӗр чунсем хӑрамасӑрах ҫӳретчӗҫ. Пӗррехинче, ун чухне хӗллеччӗ, пӗр ӗҫ пулса иртрӗ. Йӗри-тавра шап-шурӑ, юр пӗрчисем илемлӗ ҫӑлтӑр евӗр кӑвак тӳперен вӗлтӗртетсе анаҫҫӗ. Таҫта аякра мулкач сиксе ҫӳрет. Эпӗ ҫав вӑрман варринче ларакан пӳртре пурӑнаттӑм. Чӳрече умӗнче ларатӑп хайхи. Сасартӑк кантӑк умӗнчен темӗнле чӗр чун чупса кайрӗ. Хура ҫӗлӗке тӑхӑнса фуфайкӑна ҫакса ятӑм, ҫӑм атӑна тӑхӑнтӑм та урама чупса тухрӑм. Вӑрттӑн пӑхса тӑратӑп. Унта хура куҫлӑ пысӑк кашкӑр пырса тӑнӑ иккен. Хӑй пӳрт патӗнчен инҫе те каймарӗ, чарӑнса тӑрса ман еннелле ҫаврӑнчӗ. Мана курса хирӗҫ чупрӗ. Эпӗ хӑраса ӳкрӗм. Кашкӑр ман ҫине пӗр куҫ илмесӗр пӑхса тӑрать. "Хырӑмӗ выҫнӑ пулӗ унӑн", – явӑнчӗ пуҫра шухӑш. Часрах пӳрте кӗрсе кашкӑр валли ҫӑкӑр татӑкӗ йӑтса тухрӑм. Ҫӑкӑра ҫӗре пӑрахса патӑм. Кашкӑр татӑка ҫӑварне хыпрӗ, анчах чӑмласа ямарӗ. Эпӗ тӗлӗнсе кайрӑм. Ҫав вӑхӑтра чӗр чун таҫта чупса кайрӗ. Эпӗ ун хыҫҫӑн. Кашкӑр темӗнле чулсем хыҫӗнчи йывӑҫсем айне кӗрсе кайрӗ. Ҫав вырӑна вӑрттӑн пӑхса илтӗм. Ак тамаша! Кашкӑр хӑйӗн ҫурисене ҫӑкӑр таткипе хӑналать. Пилӗк ҫура выртать. Виҫҫӗшӗн куҫӗсем уҫӑлман, иккӗшӗ амӑшӗ йӗри-тавра чупса ҫӳреҫҫӗ. Кашкӑр ҫурасем хушшине кӗрсе выртрӗ.

Тӗлӗнмелле: мӗнле кӑна чӗр чун ҫук-ши? Вӗсенчен кашниййӗ сарӑ хӗвел ӑшшипе савӑнса пурӑнасшӑн. Ҫак кашкӑр та хӑйӗн тӗпренчӗкӗсене тӑрантарассишӗн хӑюллӑ утӑм турӗ.

Ҫак илемлӗ ӳкерчӗке курнӑ хыҫҫӑн килелле утрӑм. Унтанпа тӑватӑ-пилӗк кун иртрӗ. Хӑйӗн сӗчӗпе ҫурисене тӑрантарайман кашкӑр кашни кунах ман пата киле пуҫларӗ. Паллах, "ҫӗнӗ юлташа" йывӑрлӑхра май пур таран пулӑшма тӑрӑшрӑм. Апат юлашкисене кашкӑр ами валли пӗр чашӑкпа тухса лартаттӑм, ҫӳрисем валли чӗрӗк ҫӑкӑр хатӗрлеттӗм. Чӗр чун, шухӑша ӑнланнӑ пек, чашӑкри апата пушатса ҫӑкӑра ҫыртса ачисем патне чупатчӗ.

Паян та, часах кашкӑр килмелле тесе, апат илсе пӳрт умне тухрӑм. Чӗр чун килни курӑнмарӗ. Ӑна хирӗҫ утма шухӑшларӑм. Мана хирӗҫ кашкӑр килет.

– Ҫитрӗн-им, юлташӑм! Кил, ас тивсе пӑх апата. Хырӑму та выҫрӗ пулӗ, – пуплерӗм кашкӑрпа.

Сасартӑк мана хирӗҫ темиҫе йытӑ чупнине курах кайрӑм. Таҫта пӑшал сасси илтӗнет. Тин ҫеҫ апат ҫиме пуҫланӑ кашкӑр йытӑсем еннелле пӑхрӗ. Пӗр тӑхтамасӑр ҫурисем патне мар, сӗм вӑрмана кӗрсе ҫухалчӗ. Йытӑсем ун хыҫҫӑн чупрӗҫ. Йыттисенчен сунарҫисем те юлмарӗҫ. Эпӗ пӗр ҫыннине чарса:

– Ҫак кашкӑра мӗншӗн хӑвалатӑр? – тесе ыйтрӑм.

– Ӑна тытсан укҫа тӑватпӑр! Унӑн тирӗпе кӗрӗк ҫӗлеме пулать, – хуравларӗ хӑпартланнӑ арҫын.

– Укҫа ҫынна ухмаха кӑларать ҫав. Чарӑнӑр, чӗр чуна ан тытӑр! – ӑнлантарма тӑрӑшрӑм ҫынна.

– Ан сӳпӗлтетсе тӑр-ха!

Хайхи мана чышрӗ те йытӑсем хыҫҫӑн чупрӗ. Кашкӑра пулӑшас тӗллевпе эпӗ те вӗсем хыҫҫӑн васкарӑм. Пӗр сунарҫӑ пӑшалӗпе кашкӑрӑн урине амантрӗ. Чӗр чун ҫав-ҫавах пӗр чарӑнми чупать. Хӑй пута-пута анса каять, ҫапах та малалла чупать. Вӑйӗ пӗтрӗ курӑнать: йӑванса кайрӗ. Аран-аран тӑрса каллех чупрӗ.



Икӗ йытӑ кашкӑра хӑваласа ҫитрӗҫ, пӗри ӑна уринчен ҫыртса илчӗ. Кашкӑр йӑванса кайрӗ. Анчах вӑл ҫапӑҫать, каллех ури ҫине тӑрса чупать. Сасартӑк чӗр чун юр ӑшне кӗрсе ӳкрӗ. Сунарҫӑсем ҫитрӗҫ. Эпӗ те вӗсене хӑваласа ҫитсе кашкӑр ҫумне кӗрсе лартӑм. Вӑл ман ҫине пӑхса тем каласшӑн туйӑнчӗ. Вӑйсӑр куҫне хупрӗ, куҫӗнчен вӗри куҫҫуль юхса анчӗ.

Ҫавна пӑхса тӑрса та кашкӑра ниепле те пулӑшаймарӑм. Пилӗк кашкӑр ҫури тӑлӑха тӑрса юлчӗ. Вӗсене пурне те вӑрманта ларакан пӳрте илсе кӗтӗм. Пӗчӗкскерсем амӑшне чун пек кӗтрӗҫ, анчах кашкӑр ами ҫук. Тепӗр кунхине ҫурасене ветеринар патне илсе кайрӑм. Тухтӑр кашкӑр ҫурисене зоопарка пама сӗнчӗ. Кашни уйӑхра ҫӳрерӗм вӗсем патне. Зоопарк ӗҫченӗсем мана палласа ҫитрӗҫ, пӗр сӑмахсӑрах ҫурасем патне кӗртсе яратчӗҫ. Кашкӑр ҫурисем пысӑкланса пынӑҫемӗн илемленчӗҫ. Пӗри – амӑшӗ пекех. Хура куҫлӑ, хӑлхи вӗҫӗсем те хура.

– Асатте, халь ҫав кашкӑр ҫурисем пурӑнаҫҫӗ-и? – ыйтрӑм тӗлӗнсе.

– Амӑш сӑнлине вӑрмана янӑ, ыттисене зоопаркра хӑварнӑ.

– Тӗлӗнетӗп санран асатте, эсӗ питӗ паттӑрлӑ ӗҫ тунӑ-ҫке!

– Мӑнукӑмсем, манса ан кайӑр, ҫынран начар тискер чӗр чун ҫук. Этем укҫа ӑшне путнӑ. Уншӑнах тем тума та хатӗр. Ырӑ тума пӗлмелле ку пурнӑҫра. Вара ӳкӗнмелли тупӑнмасть.

Асатте каласа пани ҫинчен темччен шухӑшласа ҫӳрерӗм. Пурнӑҫри тӗрӗс марлӑх чуна ыраттарчӗ, тӗрӗс утӑм тума хистерӗ. Асаттен халалне тӗпе хурса пурнӑҫпа тан утасчӗ.

***Карина БОРИСОВА.***

Елчӗк районӗ,
Патреккел.

# Хаваслă 2014 самант

## «Чăваш алфавичĕ» сăмах каçмăш




1. Ресурс, укçа-тенкĕ, саппас. 2. Марс спутникĕ. 3. Хумма Çеменĕн чăн хушамачĕ. 4. АПШра кăларакан автомобиль марки. 5. Футболти вăрттăн тата чее хускану. 6. Африкăри пальма çинче ӳсекен улма-çырла. 7. Китайри, Корейăри хресчен çурчĕ. 8. Чăн-чăн пулса иртнĕ ĕç, пулăм. 9. Уявра тăхăнакан хура çи-пуç. 10. Музыкăри сасăсен, аккордсен пĕр çаврăмĕ. 11. Чечек. 12. Гимнастикăри сикĕ. 13. Балтика тăрăхĕнче пурăнакан халăх. 14. Хăш-пĕр сĕтел çи вăййинче усă куракан çаврашка, кубик. 15. Стройкăра усă куракан якатнă чулăн пĕр енĕ. 16. Авалхи Рим мифологийĕнчи уй-хир, вăрман, кĕтӳ турри. 17. Çӳхе, çирĕп кĕççе. 18. Çурçĕр Африкăри пуш хирте пурăнакан пĕчĕк тилĕ. 19. Ӳсен-тăрансен тĕнчи. 20. Çӳхе пурçăн пусма. 21. А.Чеховăн «Чие сачĕ» пьесинчи сăнар. 22. Чăматан, сумка хатĕрлемелли материал. 23. Вĕрсе каламалли музыка сăпрайĕ. 24. Телефон çыхăнăвĕ урлă документăн тĕрĕс копине куçармалли хатĕр.




1. Ши! кайрăм, пи! кайрăм, çӳле кайрăм, çăмарта турăм (туп.юм.). 2. Тĕс. 3. Тĕш тырă каяшĕ. 4. Чăваш Республикинчи юхан шыв. 5. Атăл çинчи хула. 6. Йывăç. 7. Çĕмĕрле районĕнчи ял. 8. Ӳсен-тăран. 9. П.Хусанкай çырнă сăвăсен кĕнеки – «... хумсем». 10. Çамрăк йывăç. 11. Вьетнам тĕп хули. 12. Инçет Хĕвел тухăçĕнчи кӳлĕ. 13. Сăвă виçи. 14. Таджикистанри хула. 15. Апата тутă кĕртмелли ӳсен-тăран. 16. Кăвак уйра ылтăн кустăрма (туп.юм.). 17. Ал пăчкин кантри. 18. Калаçма ... кирлĕ, сӳс тӳме – кисĕп (ват.сăм.). 19. Уйран çӳпçинче çу уçлама кирлĕ хатĕр. 20. Чăваш наци апачĕ. 21. Сурпан çинчи тĕрĕ. 22. Хура тата Азов тинĕсĕнчи пулă. 23. Ут таврашĕ. 24. Çăткăн кайăк.




1. Хĕлĕхлĕ музыка сăпрайĕ. 2. Тир-сăран хатĕрленĕ чухне усă куракан япала. 3. АПШри вак укçа. 4. Лимон, апельсин хуппи, техĕмлĕх. 5. Венецири XIII ĕмĕрти ылтăн укçа. 6. Çаврашка варри. 7. Нимĕç поэчĕ, антифашист. 8. Польшăри хула. 9. Н.Жуковский ячĕллĕ аэродинамика ăслăлăх тĕпчев центрĕ (аббревиатура). 10. ...-Табан (Байкал тăрăхĕнчи ту хырçи). 11. Намăсне çухатнă çын. 12. Монголи çарĕн салтакĕ. 13. Çĕр чăмăрĕн çурçĕрти çăлтăр ушкăнĕ. 14. Çĕр айĕнчи пурлăх сийĕ. 15. Авалхи турăшсен эрешĕ. 16. СССР халăх артисчĕ. 17. Намибири германи (хими элеменчĕ) кăларакан вырăн. 18. Улма-çырла, цитрус çимĕçĕсенчен сахăр хушса хатĕрлекен апат. 19. ... кăранташĕ. 20. Пăлхарсен литературовечĕ, критикĕ. 21. Витим юхан шыв юппи. 22. Организмри С тата Р витаминсем çитменнине пула аталанакан амак. 23. Авалхи грексен Антик храмĕнчи пысăк пӳлĕм. 24. Дизель топливин эталонне тĕрĕсленĕ чухне усă куракан тĕссĕр шĕвек, гексадекан.

## Криптограмма

I. 1, 6, 7, 2, 1 – Вăрмнти вĕçен кайăк.
II. 10, 15, 7, 11, 15 – Апата тутă кĕртекен ӳсен-тăран.
III. 13, 9, 12, 16, 1 – Йывăç.
IV. 5, 17, 11, 2 – Вăрманта хатĕрлекен топливо.
V. 4, 16, 14, 3, 15 – Йывăç.
VI. 6, 8, 9, 10 – Пан улми сорчĕ.

**Сăмах тупсăмĕсене тĕрĕс тупсан пушă клеткăсенче ваттисен сăмахĕ вуланĕ.**



## «Авалхи чăвашсен ар çын ячĕсем»
## Анаворд



1. Авалхи чăвашсен ар çын ячĕ (К.Турханăн «Сĕве Атăла юхса кĕрет» романри сăнар). 2. Авалхи чăвашсен ар çын ячĕ (чăваш писателĕ). 3. Авалхи чăвашсен ар çын ячĕ. 4. Авалхи чăвашсен ар çын ячĕ. 5. Авалхи чăвашсен ар çын ячĕ (П.Осиповăн (Айтар» драминчи сăнар). 6. Авалхи чăвашсен ар çын ячĕ (чăваш халăх поэчĕ). 7. Авалхи чăвашсен ар çын ячĕ (Красноармейски районĕнчи ял). 8. Авалхи чăвашсен ар çын ячĕ (Хĕрлĕ Чутай районĕнчи ял).

**Асăрхаттарни:** *Тĕрĕс хуравласан, паллă тунă юпари авалхи чăвашсен тепĕр ар çын ячĕ вуланĕ.*

***Юрий ФРОЛОВ*** (Шупашкар) **хатĕрленĕ.**